❑ КУЗНЕЦОВ АЛЕКСАНДР ВАЛЕРЬЯНОВИЧ
❑ КУЗНЕЦОВА НАДЕЖДА МИХАЙЛОВНА






# ТĂРМĂШ ТАВРАШĔНЧИ МИКРОТОПОНИМСЕМ: ЙЫШĔ, ПĔЛТЕРĔШĔ, УÇĂМЛАТМАН ЫЙТУСЕМ

**Аннотаци:** Тăвай тăрăхĕнчи ялсем Чăваш Енри чи авалхи ялсен шутне кĕреççĕ. Унта Хусан хулине вырăссем парăнтариччен нумай маларахӳ никĕсленнĕ, Христос тĕнне йышăниччен икĕ-виçĕ ĕмĕр малараx йĕркеленнĕ ялсем те сахал мар. Çав ялсенчи, вĕсен таврашĕнчи тĕрлĕ вырăн, шыв, çаран, вăрман ячĕсем кăсăк. Пирĕн статья - çак ĕçĕн пуçламăшĕ. Кунта май килнĕ таран ытларах топоним пухса кăтартма тăрăшнă. малашне вĕсене туллин, пур енлĕн тишкерме палăртатпăр.

**Тĕп сăмахсем**: Тăрмăш ялĕ, ял ячĕ, кас ячĕсем, урам ячĕсем, çăл ячĕсем, шыв ячĕсем.

**Tırmış Civarındaki Mikrotoponimler: Bölgesi, Anlamları, Açıklanmamış Sorular**

**Özet:** Tıvay yöresindeki köyler Çuvaş Ülkesindeki en eski köyler arasında yer almaktadır. Burası Kazan şehrini Ruslar teslim almadan çok daha önce kurulmuştur. Hristiyanlığın kabul edilmesinden iki üç yüzyıl önce kurulmuş olan köyler de az değildir. Bu köylerdeki ve bunların civarındaki çeşitli yer, su, çayır ve orman adları oldukça dikkat çekicidir. Bu makale, bu çalışma için bir başlangıştır. Burada mümkün olduğunca toponimler tespit edilip gösterilmeye çalışılmıştır. Gelecekte ilgili yer adları bütüncül şekilde, tüm yönleri ile araştırılacaktır.

**Anahtar Sözler**: Tırmış Köyü, Köy Adları, Mahalle Adları, Sokak Adları, Pınar (Kaynak) Adları, Su Adları.

**Microtoponies Around Tırmış: Their Region, Meanings, Unexplained Questions**

**Abstract:** The villages in the region of Tıvay are among the oldest villages in Chuvash Country. This place was founded long before the Russians conquered the city of Kazan. Also, the villages that were founded two or three centuries before the acceptance of Christianity are not few. The

names of various places, water, meadows and forests in and around these villages are quite remarkable. This article marks a beginning for this study. Here, as much as possible, toponyms were tried to be detected and displayed. In the future, relevant place names will be investigated in all aspects and in a holistic way.

**Key Words**: Tırmış Village, Village Names, Neighborhood Names, Street Names, Fountain Names, Water Names.

Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялĕ икĕ район центрĕ - Канаш хулипе Тăвай ялĕ - хушшинче вырнаçнă. Тăвай районĕ çурçĕр енчен Вăрмар районĕпе, хĕвеланăç енчен Канаш районĕпе, кăнтăрпа хĕвелтухăç енчен Тутарстанпа чикĕленет. Тăрмăш ялĕ Чăваш Республикин Тăвай районĕнчи Тăрмăш ял тăрăхне кĕрет. Тăрмăш ял администрацийĕнче икĕ ял: Тăрмăш тата Лачкасси. XVI ĕмĕр варринче никĕсленнĕ текен халап-хăнар çÿрет. Хусана илнĕ хыççăн çак тăрăха Логов (Ольгов) хушаматлă улпутсем килсе вырнаçнă теççĕ. Вĕсем чăвашсене унтан хĕссе кăларса янă, кăсем *Хыркут* текен вырăна куçса ларнă. Вăхăт иртнĕçем çакăнти чăвашсем *Хыркутран* хальхи Лачкасси ялĕ тата Тăрмăш ялĕн Шуркаç ятлă пайĕ вырăнне — вăрман уçланкине — куçса ларнă. XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче Тăрмăш çыннисен пĕр пайĕ кăнтăралла куçса кайса хальхи Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялне пуçласа янă.

XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнчен XIX ĕмĕр вĕçĕччен Тăрмăш ялĕ икĕ ялтан – Аслă Тăрмăш тата Кĕçĕн Тăрмăш ялĕсенчен — тăнă. XVI—XVIII ĕмĕрсенче Аслă тата Кĕçĕн Тăрмăшсем Хусан Кĕпĕрнинчи Сĕве уесне кĕнĕ. XVIII ĕмĕрте вулăссем йĕркелесен икĕ Тăрмăш ялне те Тимеш (хальхи Тăвай ялĕ) вулăсне кĕртнĕ. XIX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсемччenех Аслă тата Кĕçĕн Тăрмăшсемпе Лачкасси ялĕ Яковлево-Лачкасси ял пĕрлĕхĕнче, 1850-1880 çулсенче Тăрмăш ялĕсем Хусан кĕпернинчи Çĕрпӳ округĕн Тĕмер вулăсĕнче, 1880-1921 çулсенче Хусан кĕпернинчи Çĕрпӳ уесĕн Архангел-Тăвай вулăсĕнче пулнă. 1927-1935 тата 1962-1965 çулсенче Чăваш АССРĕн Канаш районне кĕнĕ. Ытти тапхăрта Чăваш АССРĕн, Чăваш Республикин Тăвай районĕнче пулнă (Ушаков 2008: 11-20).

Тăвай тăрăхĕнче пурăнакан чăвашсен чĕлхине тĕрлĕ ушкăна кĕртни тĕл пулать. Тĕрлĕ ăсчах Тăвай районĕнчи калаçусене çакăн пек курать:

1) анатри диалект йышĕнче[1], анатри диалектăн Йĕпреç-Тăвай калаçăвĕнче[2], анатри диалектăн çурçĕр-хĕвелтухăç ушкăнĕнчи Вăрмар-Тăвай-Канаш калаçăвĕнче[3];

---

[1] *Н.И. Ашмарин.* Материалы для исследования чувашского языка. – Казань, 1898. – С. II-V; *Комиссаров Г.И.* Чуваши Казанского Заволжья // Известия общества археологии, истории и этнографии при Императорском Казанском университете. Том XXVII. Вып. V. – Казань, 1911. – С. 429-432.

[2] Анатри диалект, унăн вырăнти калаçăвĕсем // *Сергеев Л.П.* Чăваш чĕлхин вырăнти калаçăвĕсем. – Шупашкар, 1969. – С. 41-47.

[3] *Канюкова А.С.* Некоторые особенности диалектов чувашей тури и анатри // Материалы по чувашской диалектологии. Вып. I. – Чебоксары, 1960. – С. 80-122.

2) вăта (куçăмлă) калаçу йышĕнчи кăнтăр Çавал вак калаçăвĕнче[4].

Тĕплĕнрех топонимсем çинче чарăнса тăрар.

Чăваш Енри топонимсене тĕпчесе çырнă ăçсем сахалах мар. Ал çыру хальлĕн архивра упранаканнисем те, пичетленсе тухнисем те йышлă. Вĕсен шутĕнче М.Р. Федотов, Н.А. Нестеров, Л.П. Сергеев, Г.Е. Корнилов, М.И. Скворцов, Н.И. Егоров, Г.А. Дегтярев, А.А. Сосаева, А.С. Иванова, В.В. Алмазов т.ыт.те (тĕплĕнрех çакăнта пăхмалла: Батченко 2004: 87-99) пурнăçланă ĕçсене асăнса хăвармалла. Сахал мар тĕпченĕ пулин те, тĕпчевçĕсем асăрхаман, сăнласа-çырса кăтартман топонимсем халĕ те йышлă. Уйрăмах микротопонимсене ăсчахсем «курмасăр» иртнĕ.

**1. Ял тата ял пайĕсен ячĕсем.**

**Ялăн тĕрлĕ ячĕсем**. *Тăрмăш ялĕ. Тăрмăш* ялне никĕслекенсем малтан *Чишка* тата *Йӳçлĕ вар* çырмисен хушшине килсе вырнаçнă теççĕ. Вĕсем хальхи *Тăрмăш шывĕн* (XVIII ĕмĕрти картăсем çинче *Псенарь* тесе çырнă) сылтăм енне малтан пӳрт-çурт лартнă. 1721 çулхи ландрат çыравĕпе килĕшӳллĕн, Тăрмăш шывĕн сулахай енчи яла малтан «Деревня Малые Турмыши Абесказаново тож» (*Кĕçĕн Тăрмăш* ялĕ, вăлах Абесказаново) тесе палăртнă. Çав çулхи «Ревизская сказка» ятлă документра çак ялăн пĕр ятне анчах асăннă: *Кĕçĕн Тăрмăш*. Çапла майпа, 1721 çулта икĕ Тăрмăш пулнă: *Аслă Тăрмăш* тата *Кĕçĕн Тăрмăш*. *Тăрмăш* сăмах мĕне пĕлтерни пирки те тĕрлĕ шухăш пур: пĕрисем ăна *Тăрмăш* ятлă çын ятĕнчен пулса кайнă теççĕ (Кузнецов 2000-2020), теприсем *тăрмаш* е *тăрмăш* ‘çине тăрса, пĕтĕм вăя парса ĕçле, тăрăш, кĕреш’ ĕç-хĕлпе çыхăнтараççĕ (Ушаков 2008: 15; Амантай 2014: 178) тата тутар чĕлхинчи тăрмăш ‘пурнăç’ сăмахпа çыхăнтарни те тĕл пулать (Ушаков 2008: 15). Пирĕн шутпа, ял ятне ĕçленипе çыхăнтарни тĕрĕсех мар. Тĕрлĕ ял-хула ятне çăл, юхан шыв, çын ячĕпе çыхăнтарни вырăнлăрах пулĕ. *Тăрмăш* авалхи чăвашсен «пурнăç, пуянлăх» пĕлтерĕшпе çӳрени паллă. Тĕслĕхрен, тутарла *тормыш* ‘пурнăç’ (Газизов и Гимадиев, 1955: 65), пушкăртла *тормош* ‘пурнăç’ (Каримова 1954: 137), кăркăсла *турмуш* ‘пурнăç’ (Юдахин 2000: 187), казахла *тұрмыс* ‘пурнăç’ (Махмудов и Мусабаев 1954: 371) т.ыт.те. Турккăлла *durmak* ‘тăр; пул; пурăн’ (Мустафаев и Щербинин 1972: 881) пĕлтерĕшсемпе çӳренине палăртаççĕ. Тăрмăш ят пирки тĕрлĕ тĕпчевçĕ çырса хăварнă: *Тормыш* (Магницкий 1905: 87), *Тăрмăш* - арçын ячĕ тата Тăвай, Елчĕк, Патăрьел районĕсенчи ял ячĕсем (Амантай 2014: 178). Пĕлтерĕшне *тăрмаш* (çине тăрса, пĕтĕм вăя парса ĕçле, тăрăш, кĕреш) сăмахран кăлараççĕ

*Абесказаново* - Кĕçĕн Тăрмăшăн иккĕмĕш ячĕ. Çакăн пек ят чăвашсем е тутурсем пурăнакан вырăнсенче тĕл пулни пирки пĕр хыпар та тупаймарăмăр. Интернет уçлăхĕнче те, ытти çăлкуçсенче те мĕне пĕлтерни пирки уçăмлатаймарăмăр.

**Ял пайĕсем, кассем.**

Тăрмăш ялĕ тăватă пысăк пайран тăрать: *Шуркас, Мишер, Шолонк, Анат кас (Нимĕç касси)*. Хăшĕ-пĕри пиллĕкмĕш кас - *Каяка касси* - уйăрать. Ял пайĕсен, касăсен ячĕсем мĕнле пулса кайни кăсăк.

[4] *Матвеев Т.М.* Краткий обзор чувашских диалектов // Материалы по чувашской диалектологии. Вып. I. – Чебоксары, 1960. – С. 8-64.

*Шуркаç*. Тăрмăш ялĕ *Шуркаçран* пуçланса кайни паллă. *Шуркаç* ят мĕнле пулса кайни пирки çакăн пек калама пулать: вăл *шур* (шурлăх) тата *каçă* сăмахсенчен пулса кайнă. Шурлăх урлă каçă тунă вырăнта йĕркеленнĕ. Çак касра халĕ те çăвĕпех нӳрлĕ, йĕпе тăракан вырăн сахал мар. Кунти пĕр çырми те *Йӳçлĕ вар* ятлă. Çакăнта яланах йĕпе вырăн, шурлăх пек лачăртатса, йӳçсе тăракан лаптăксем пур. 1795 çулти карта çинче *Палмата* çырмине те «йӳçлĕ вар» тесе палăртнă (ЧР ПИА 206 ф., 93 ĕç) (Ушаков 2008: 20-21). Çапла майпа *Шуркаç* кассипе унти *Йӳçлĕ вар* çырман ятнĕ уçăмлатрăмăр.

*Мишер*. Çак сăмах служилый çынсен пĕлтерекен *Можар* е *Мишар* сăмахран пулса кайма пултарать теççĕ. Э.С. Ушаков тĕпчевçĕ çапла çырать: «Качимовы (ялти пĕр йăх хушамачĕ. - *А.К.)* рассказывали, что их фамилия произошла от слова «Кучум» (*Кăчам*). Их предок якобы служил в русской армии во время покорения Сибири и воевал против хана Кучума. Второй род Качимовых произошел тоже из мещеряков. Возможно, служилыми людьми были и другие жители околотка. Наверное, это наиболее вероятная версия происхождения названия околотка *Мишер*» (Ушаков 2008: 21). Çавăн пекех Христос тĕнне йышăнман, хăйсен авалхи тĕнĕпе пурăнакан чăвашсене çĕнĕ тĕне йышăннă чăвашсем мишер тесе калама пултарнă текен шухăш та пур (Ушаков 2008: 285).

Çак статья авторĕ вара урăх верси илтнĕ: *Мишер кассин яч çампик пулса кайнă: ĕлĕк ялти пĕр салтакпа пĕрле аманнă мишер салтакĕ пурăнма килнĕ. Унăн кил-çурч те, тванĕсĕм те пулман, çампа у салтакра пĕрле пулнă юлташĕ патне килнĕ, ун панче пурăннă. «Кăш кас эс?» - тесе ыйтсан вара çанти кас çыннисĕм мишер пурнакан кас, мишер кассии теме пуçланă* (Кузнецов 2000-2020).

*Шаланк*. Çак тăрăхра вăрман хĕрринче е вăрман уçланкисенче йăва çавăракан *шаланкă* ятлă кайăксем йышлă теççĕ. Вырăсла çак сăмах е ‘канюк’, е ‘сарыч’ пулать. Яндекс.Тăлмачă турккăлла *Şahin* ят сĕнчĕ. Э.С.Ушаков тĕпчевçĕ вара *Шаланк касси* çапла пулса кайма пултарнă тет: Шала-н-касси ă (шалти кас) ă Шаланк (Ушаков 2008: 288). Хăйĕн шухăшне архив материалĕсемпе çирĕплетме тăрăшать: «В анкете, составленной по поводу описания деревни Уразмаметево (Тăрмăш) Яльчикского района в графе: «Из какой деревни?», указано - «Шалти Тăрмăшран» (НА ЧГИГН, отд. Ш, ед. хр. 17, л. 150). Значит, какая-то часть нашей деревни называлась таким образом» (Ушаков 2008: 21).

*Нимĕç касси*. Тĕрĕс пĕлтерĕшĕ паллă мар. Анчах та кунта нимĕçсем пурăнманни паллă. Пĕрисен шухăшĕпе кунта вырăссен темиçе кил-йышĕ пурăннă, çавăнпа çакăн пек ят панă (Ушаков 2008: 22). Теприсем вара кунта тахçан пĕр нимĕç çĕр каçса кайнă, çавăнпа çак ята тивĕçнĕ теççĕ (Ушаков 2008: 22, 285). Виççĕмĕшсем ялăн çак пайĕнче нимĕçле, кĕтессемсĕр пураса хăпартнă çуртра пурăнакансем пулнă, çавăнпа Нимĕç касси тенĕ тесе çирĕплетеççĕ (Ушаков 2008: 285). Хăш шухăшĕ тĕрĕс пулнине документсемпе çирĕплетме çук.

*Анаткас*. Çак ят кайран пулса кайни паллă Вăл Нимĕç кассин иккĕмĕш ячĕ. Шаланк кассипе танлаштарсан вăл айлăмрах вырăнта сарăлса выртать. Вырăнне кура çак ята тивĕçнĕ.

*Каяка*. Ялăн пиллĕкмĕш пайне, *Каяка* ятлăскерне, кам *кас* тет (*Каяка касси*), кам *урам* тет (*Каяка урамĕ*), ытларах пайĕ *Каяка* тенипех çырлахать. Вырăнне пăхсан вăл ялăн хĕвел анăç енче вырнаçнă. Ĕлĕкхи чăвашсем хĕвел тухăçне *мал ен*, хĕвел анăçне *кай ен* тенĕ. Çак кас лаптăкĕпе чи пĕчĕкки, вăл пысăках мар урам пек çеç. Ытти кас çыннисем каланă тăрăх, çак кассем вăйăа та

уйрăммăн ирттернĕ, вĕсем *каяка уявĕ* е *каяка вăййи* те, теприсем каланă тăрăх *каяка кунĕ* те ирттернĕ. Ытти кассен çакăн пек кас уявĕсем пулнине астумаççĕ (Кузнецов 2000-2020).

**Урам ячĕсем.**

Хальхи *Октябрь, Чапаев, Энгельс* урамĕсенче вĕсене пĕрлештерекен пралук таран çеç пўртсем пулнă. *Лесная* тата *Л. Толстой* урамĕсен вырăнĕнче пўртсем пулман. Лесная урама ХХ ĕмĕрти ял совечĕн хăш-пĕр докуменчĕсенче «самовластная» тесе палăртнă. Э.С. Ушаков краевед шухăшĕпе, Мишер кассинчи хăш-пĕр çамрăксем хăйсен ирĕкĕпе, власть ирĕк памасăрах çак урам вырăнне кил-çурт çавăрнă, çавăнпа çакăн пек ят пама пултарнă. Урам Павар тата Ситюк çырмисен хушшинчи Упрук çĕрĕ пулнă вырăнăн пĕр пайĕнче йĕркеленнĕ.

*Лесная* урам 1930-мĕш çулсенче йĕркеленнĕ. Вăрман урамĕн тăкăрлăкĕ вырăнĕнче ĕлĕкрех упрук çĕрĕнче çапса илнĕ тырра çапмалли авăн карти (анкарти) пулнă.

*Л. Толстой* урамĕ 1950-1960 çулсенче йĕркеленнĕ.

Çак вăхăталлах Мишерпе Шуркаçри ытти урамсем, ялти *К. Маркс, Плеханов, Николаев, Суворов, Ярослав, Зеленая, Лесной* урамсем те йĕркеленсе пынă. *Кăнтăр* (*Южная*) урам колхоз пулăшнипе 1960-мĕш çулсенче йĕркеленме пуçлать. Çамрăксен урамне 1980 çулсенче пуçласа янă. ун чухне çамрăк специалистсем валли пĕр хутлă пўртсемлĕ, хуçалăх хуралтисемплĕ пĕр квартал кил-çурт туса панă. *Çурçĕр* урамĕнче çамрăксем 15-20 çул каялла анчах кил-çурт çавăрма пуçланă. 1980-мĕш çулсенче *Сад* урамĕн тăкăрлăкĕпе *Хĕвел тухăç* урамĕ йĕркеленме пуçланă.

1973 çулччен Тăрмăш ялĕнче урамсен официаллă ячĕсем пулман. 1948 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнчи ял совечĕн протоколĕнче, тĕслĕхрен, çакăн пек урамсене асăнса хăварнă:

*Çăл çырми* урамĕ, Самовластная; *Шупашкар урамĕ* (çак урамра Иван Чебоксарский пурăннă); *Çуннă* урам е *Ушаковская* (çак урамра Ушаковский кил-йышĕ пурăннă, ун ячĕпе); *Кивĕ Ахпўрт* урамĕ, Староахпердинская; *Чишка* урамĕ (Чишка çырми хĕррипе вырнаçнă урам); *Йўçлĕ вар* урамĕ (Йўçлĕ вар ятлă çырма хĕррипе вырнаçнă урам); *Шкул* урамĕ, Школьная; *Ятсăр* урам, Кошкин Николай тата Авва Мария пурăннă урам, Безымянка; *Канаш* урамĕ пулнă урам, Бывшая Канашская; *Каяка* (Николаев урамĕн вĕçĕ); *Ятсăр* урам, Сидоров П. тата Григорьев Илларион пурăнакан урам, Безымянная[5] (Ушаков 2013: 70).

Хальхи вăхăтра Тăрмăшра çакăн пек **урамсем** пур:

*Çуркунне* урамĕ (малтан - Жданов урамĕ пулнă), *Володарский* урамĕ (ул. Володарского), *Володарский* тăкăрлăкĕ (пер. Володарского), *Хĕвел тухăç* урамĕ (ул. Восточная), *Симĕс* урам (ул. Зеленая), *Аслă* урам (официаллă - Карл Маркс урамĕ). Ял халăхĕ *Аслă урам* тет, Тăрмăшри чи вăрăм урам, Шаланкпа Нимĕç кассинче (Анаткасра) тăсăлса выртать, тăрăшшĕ çухрăм çурă, *Ленин* урамĕ (ул. Ленина. Мишерпе Шуркаçа çыхăнтаракан вăрăм урам, тăршшĕ çухрăм ытла), *Çăл* урамĕ (ул. Лесная (Мишерте)), Çăл урамĕ (переулок Лесной), *Мир* урамĕ (ул. Мира), *Мичурин* урамĕ (ул. Мичурина), *Çамрăксен* урамĕ (ул. Молодежная. Ун хыççăн ялта 4-5 çĕнĕ урам йĕркеленнĕ пулсан та халăх халĕ те *Çĕн урам* тет), *Николаев* урамĕ (ул. Николаева), *Октябрь* урамĕ (ул. Октябрьская), *Плеханов* урамĕ (ул. Плеханова), *Уй* урамĕ (ул. Полевая), *Пахча* урамĕ (ул. Садовая), Пахча урамĕ (пер. Садовый), *Çурçĕр* урамĕ (ул. Северная), *Çеçпĕл* урамĕ (ул.

[5] *Тăвай районĕн архивĕ. ф.53. д. 27*.

Сеспеля), *Совет* урамĕ (ул. Советская), *Суворов* урамĕ (ул. Суворова), *Толстой* урамĕ (ул. Толстого), *Чапаев* урамĕ (ул. Чапаева), *Шупашкар* урамĕ (ул. Чебоксарская (Шупашкар пачăшки пурăннă теççĕ, çак урамра Иван Чебоксарский ятлă-шывлă çын пурăннă тени те тĕл пулать), *Энгельс* урамĕ (ул. Энгельса), *Кăнтăр* урамĕ (ул. Южная), *Ярослав* урамĕ (ул. Ярославская).

Официаллă ятсен ячĕсем уçăмлă, вĕсене паллă çыравçă, çар çынни, ăсчах, 1917 çулхи революципе ун хыççăнхи ĕççене активлă хутшăннă çынсен ячĕсемпе çыхăнтарни курăнать. Унсăр пуçне тĕнчен тăвата енче, вырнаçнă тăрăхри уйрăмлăхсене, япаласене кура тата ял çыннисемшĕн мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине асра тытса (Аслă урам) ят панине те асăрхама пулать.

## 2. Ял таврашĕнчи вырăн ячĕсем

### Шыв ячĕсем: юхан шывсем, çăлсем, пĕвесем, кӳлĕсем

Тăрмăш ялĕн çĕрĕ урлă çакăн пек юхан шывсем юхса юхаççĕ: *Тăрмăш, Вĕре, Чечеш*. Ĕлĕк вара *Псенарь, Инсер, Пшенер, Печер* тесе çырса хăварнă юхан шывсем та пулнă. Вĕсем пĕр юхан шывăн ячĕсем е тĕрлĕ шыв ячĕсем пирки шутламалли нумай.

*Вĕре.* Çак юхан шыва пĕвеличчен Хучель ялĕн чиккинче, шыв пуçламăшĕнче, çăл куçсем нумай тапса тăни курăннă. Вăл вĕресе тăнă пек туйăннă. Çавна пула ăна *Вĕре вари* тесе каланă (Кузнецов 2000-2020).

*Нăрваш.* Тăвай районĕнче Нăрваш шывĕ пур. Ун пирки Ю.Н. Исаев тĕпчесвçĕ çакăн пек çырать: «В Янтиковском районе проистекает речушка *Норвашка*. До переселения в эти местности предков чувашей (прямых наследников волжских болгар) на этой территории проживали финно-угорские племена, большей частью марийцы. Топоним «Норваш-Шигали» состоит из двух отдельных топонимических образований. Так, топоним «Норваш» (чув. *Нăрваш*), распространенный на современной территории Батыревского района Чувашской Республики, по нашему мнению, привнесен основателями данного поселения» (Исаев 2015: 106).

*Инсер*. Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ (Ушаков 2008: 17).

*Псенарь*. Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ (Ушаков 2008: 17).

*Пшенер*. Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ (Ушаков 2008: 17).

*Печер*. Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ (Ушаков 2008: 17).

*Тăм шывĕ.* Тăрмăш шывĕ çак юхан шыва юхса кĕрет. Тăмлă вырăнта юхса выртнипе çакăн пек ята тивĕçнĕ теме пулать.

*Тăрмăш.* Чечешпе Вĕре шывĕсем Тăрмăш шывне пĕрлешсе Тăм шывнелле вирхĕнеççĕ. Тăрмăш шыв ячĕ *Тăр-* тата -вăш компонентсенчен йĕркеленме пултарнă текен шухăш та пур. Хальлĕхе уçăмлă мар.

*Уй пуç.* Ял çĕрĕсен шутĕнчи чи пысăк уй пуçланакан вырăнти пысăках мар юхан шыв. Ятне вырăна кура панă.

*Чечеш.* Тăрмăш шывне юхса кĕрекен юхан шыв ячĕ. Э.С. Ушаков *чечек* сăмахпа çыхăнтарать, Хĕрарăм ячĕ пулнине палăртать (Ушаков 2008: 288). Енĕш Нăрваш çыннисем ăна уйăрсах каймаççĕ, *Тăрмăш* шывĕ теççĕ.

Тăрмăш тавра çăл тавраш сахал мар. Чи паллисем: *Хура çăл, Чашлама, Çăл çырми, Часовни, Михха, Раман*. Вĕсен ячĕсене тишкерсе тухар.

*Хура çăл*. Ĕлĕк 10 ытла çăлтан, халĕ тапса тăракан пилĕк çăлтан çеç тăракан çăлкуçсен ушкăнĕ. Унти шыв хура тĕслĕ курăнать. *Хура çăла* Чăваш Республикин ертӳçисем 1981 çулта патшалăх сыхлакан çут çанталăк палăкĕсен шутне кĕртнĕ.

*Чашлама*. Ялăн çурçĕр хĕвел тухăç енче вырнаçнă сăвапла вырăн. Унта ĕлĕк вăйлăн тапса тăракан, шывĕ çӳллĕ вырăнтан шавлăн чашлатса юхса анакан нумай çăл куç пулнă. Ватăсем каланă тăрăх, Чашламари çăлсенчен тапса тухса юхакан шыв сасси яла çитиех илтĕннĕ. Унта çити вара çухрăм ытла.

*Çăл çырми*. Ялта чи пысăк та вăйлă юхакан çăлсенчен пĕри. Ял çыннисем ăна ĕлĕкренпех тасатса, пурине çĕнетсе тирпейлесе тăнă (Ушаков 2008: 286).

*Часовни*. Мишерпе Шаланк хушшинчи чикĕре Тăрмăш шывĕн сулахай енчи вырăн. Çакăнта çăл вăйлă тапса тăнă, 1745 çулта ял çыннисене Христос тĕнне йышăнтарнă. Каярахпа кунта часовня лартнă (Ушаков 2008: 288).

*Раман*. Ял варринчи çырмари çăл. *Роман* (латин. *Роман* 'Рим хулин çынни', 'Рим хулинче пурăнакан') ятлă çын ячĕпе çыхăннă теме пулать, чăвашсем *Раман* теççĕ. Раман тесе никĕс тĕрекĕ çапса кĕртмелли мăлатука каланă. Хăш сăмахпа çыхăннă, мĕншĕн çакăн пек ят пани паллă мар.

**Пĕвесемпе кӳлĕсем**

*Вĕре варри*. Колхоз çĕрне шăварма пĕвеленĕ пĕр çухрăм ытла тăрăшшĕ пĕве. Вăйлă тапса тăракан çăл нумай пулнипе шыв вĕренĕ пек курăннипе ятне Вĕре варри тенĕ (*вĕре* - турккăлла *kaynatak*).

*Кантăр кӳлли*. Ĕлĕк кантăр шӳтерме е хутма усă курнă вырăн.

*Курăс кӳлли*. Тăрмăш тавырашĕнче икĕ кӳлĕ: Хура çăл çывăхĕнче тата Чулкаç çырминче. Курăс шӳтерме арман пĕвисемпе те анлăн усă курнă (Ушаков 2008: 285).

*Плотина*. Ял варринчи пĕвене 1934-1935 çулсенче пĕвеленĕ. Ял халăхĕ ăна *Плотинш* тет.

*Чулкаç*. Ку çырмара чул нумай пулнă. Ăна пӳрт никĕсне яма пуçтарнă, мунча чулĕ валли те илнĕ. Нушта урарисемпе (ачурапи), лашасемпе турттарнă. Ку пĕве колхоз сад пахчи çумĕнче вырнаçнă.

**3. Тăрмăш çыннисем никĕсленĕ ялсем**

Тăрмăшсем тăвата çĕнĕ ял никĕслени паллă. Вĕсем хальхи Тăвай, Канаш тата Елчĕк районĕсен çĕрĕсем çинче вырнаçнă: *Лачкасси, Тăрмăш, Микушка* тата *Хучел*.

*Лачкасси* (Латышево). Чи малтанах Лачкасси пирки каласа хăвармалла. Вырăсла ячĕ *Латышево* пулнă пирки хăшĕ-пĕри ăна *латыш* (Балтика тинĕсĕ хĕрринче пурăнакан халăх) сăмахпа çыхăнтарать. Анчах та çак этимологи тĕрĕсех мар пулмалла, ăна çапла вырăс çыравçисем çырса хăварма пултарнă. Чăвашла ячĕ - *Лачкасси* - çак сăмахсенчен пулса кайма пултарнă: *лачака* Ă *касси*. Тĕслĕх вырăнне Етĕрне районĕнчи *Лапракасси* (< *лапра Ă касси*) ялне илсе пама пулать. *Лачкасси* - ял вырнаçнă вырăна пĕлтерет. Тăвай тăрăхĕнче ял вырнаçнă вырăна палăртакан ятсем сахал мар: *Вăрманхĕрри* (*вăрман Ă хĕрри*), *Тăвай* (*тăв (ту) Ă айĕ*), *Çăлпуç* (*çăл Ă пуç*), *Элпуç* (*Эл* (юхан шыв ячĕ) *Ă пуç*), *Сăхăтпуç* (*Сăхăт* (юхан шыв ячĕ) *Ă пуç*), *Чӳкçырми* (*чӳк Ă çырми*).

1721-1764 çулсенчи ревизи кĕнекисенче Лачкасси ялне *Яковлево* (< евр. *Иаков, Яков* 'хыççăнах пыракан' Ă *-его* (япала камăн та пулин пулнине пĕлтерекен суффикс)), XIX ĕмĕрте *Яковлево-Латышево* тесе палăртнă. К.В.Элле тĕпчевçĕ Лачкасси ялĕн тепĕр ятне çырса хăварни пур: «*Йаку касси*; см. *Лачу касси*. Латышево, 10. Янт. в., Ц. у.» (Элле 563: 68); *Лач касси*; см. *Йаку касси*. - Латышево, 10. Янт. в., Ц. у.» (Элле 563: 128). Э.С. Ушаков шухăшĕпе, Лачкасси ялне никĕслекенсен шутĕнче *Якку* 'Яков' ятлă çын пулма пултарнă, çавăнпа «Ревизские сказки» текен документсенче ял ятне *Яковлево* тесе палăртнă, XIX ĕмĕрти архив докуменчĕсенче вара Яковлево-Латышево тесе çырса хăварнă .

*Тăрмăш* (Уразмаметево). XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче Тăрмăшри 19 кил-йыш кăнтăрала куçса кайнă. Вĕсем хальхи Елчĕк районне кĕрекен Тăрмăш ялне никĕсленĕ. Э.С. Ушаков çак ялти тавра пĕлӳçĕсен тĕпчевĕсем çине тайăнса каланă тăрăх, Элмекеев (Шемяков) йăхĕнчи 7 хуçалăх, Шерпуков (Щербаков) йăхĕнчи 4 хуçалăх тата Тават йăхĕнчи 4 хуçалăх куçса кайнă.

*Хучел* (Хучель). Арçын ятĕнчен пулса кайма пултарнă. Çак тăрăхра Хучел ялĕ пуçланиччченех *Хучел çырми* пулни паллă. Ялĕ 1929 çулта никĕсленнĕ. 1721-1762 çулсенчи «Ревизские сказки» ятлă документсенче «Хочаля», «Хочеля» ят 3 хут тĕл пулнă (Ушаков 2008).

*Микушка* (Новые Турмыши). 1930 çулта Микушка çырми хĕррине 25 кил-йыш куçса ларнă. Çак ят Николай ('халăхсене çĕнтерекен' (*ника* 'çĕнтерӳ' тата *лаос* 'халăх')) авалхи грек ятне чăвашлатнă вариантĕнчен пулса кайнă. 1795 çулхи картăсенче *Мокошка* текен çырма пулнă, чăвашсен Микуш, Микушк», Микула ятсем анлă тĕл пулаççĕ. Анчах та мĕнле сăлтавпа çак çырмана Микушка ят пани паллă мар (Ушаков 2008: 284).

**4. Пĕлтерĕшĕ паллă мар ятсем.**

*Абесказаново* - Кĕçĕн Тăрмăшăн иккĕмĕш ячĕ. Çак ят пирки хыпар çук. Интернет уçлăхĕнче те, ытти çăлкуçсенче те мĕне пĕлтерни пирки уçăмлатаймарăмăр.

*Псенарь*. Тăрмăш ялĕ варринчи юхан шыв. Халĕ çак ята маннă, картăсенчи *Тăрмăш шывĕ* ята та сахал çын пĕлет, пурте *Плотина* теççĕ. Псенарь ят пĕлтерĕшĕ паллă мар. Элĕк районĕнче ăна çывăх ял тата юхан шыв ячĕсем пур: *Пиçенер* — Чăваш Енĕн Элĕк районĕн ялĕ. Вăл Юнтапа ял тăрăхĕ шутне кĕрет. "Пиçенер" гироним — мари чĕлхинчен кĕнĕ теме пулать. Çавăн ятлă юханшыв та пур район çĕрĕнче. *Пиçенер* сăмаха чăвашла куçарсан (*пиçе* 'хăвăрт' Ă *энгер* 'шыв') 'хăвăрт юхакан шыв' тенине пĕлтерет (https://www.wikiwand.com/cv/Пиçенер).

Пиçенер ялĕ пирки Чăваш энциклопедийĕнче кĕскен çырсак кăтарнă: Пизенеры (http://enc.cap.ru/?tăworld&lnkă1570).

*Инсер* (Ушаков 2008: 17). Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ.

*Пшенер* (Ушаков 2008: 17). Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ.

*Печер* (Ушаков 2008: 17). Пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар. Хальхи *Тăрмăш* шывĕн пĕр ячĕ.

Тăрмăш таврашĕнчи хăш-пĕр микротопонимсене анчах тишкерсе тухма пуçларăмăр. Апла пулин те, кунта халиччен çырăнса юлман, пĕлтерĕшне уçăмлатман ятсем сахал мар пулни курăнать. Вĕсемсĕр пуçне пĕчĕкрех çырма-çатра, тĕрлĕ çыран. хăртни ячĕсем йышлă. Вĕсем мĕнле вăрттăнлăх упранине тĕпчеме пуçланă кăна-ха.

**Литература**


Батченко, Елена Игнатьевна (2002). *Чувашское языкознание (1730-2002): Библиографический указатель* в 2-х ч. Ч. 1. Чебоксары: ЧГИГН. 192 с.

Газизов, Р.С. и Гимадиев, М.Г. (1955). *Русско-татарский словарь (для начальной и семилетней школы).* Допол., испр. 3-е изд. Казань: Таткнигоиздат. 300 с.

Исаев Ю.Н. (2015). “О происхождении названий некоторых мест юга Чувашии (на примере фольклорных и литературных источников)”. *Актуальные проблемы диалектологии языков народов России: Материалы XV Всероссийской научной конференции,* Уфа. С. 106-110.

Каксин, А.Д. (2012). “О четырех типах топонимов на территории современной Хакасии (в аспекте «русского влияния»)”. *Этнолингвистика. Ономастика. Этимология: материалы II Междунар. науч. конф.*, Екатеринбург, 8–10 сентября 2012 г.: 2 ч. Ч. 1. Екатеринбург, Изд-во Урал. ун-та. С. 107-108.

Каримова, Галия Рахмановна (1954). *Русско-башкирский словарь: Около 14000 слов* / под ред. чл.-кор. АН СССР, действ. чл. Акад. пед. наук РСФСР проф. Н.К. Дмитриева. Москва: Гис. 600 с.

Кузнецов, Александр (2000-2020). *Кузнецов А.В. Чăваш Республикин Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялĕнче 2000-2020 çулсенче пухнă материал.*

Магницкий, В.К. (1905). *Чувашскія языческія имена.* Казань: Типографія Императорскаго Университета. 104 с.

Махмудов, Х. и Мусабаев, Г. (1954). *Казахско-русский словарь* / под ред. Г. Мусабаева. Алма-Ата: Издательство Академии наук Казахской ССР. 574 с.

Мустафаев, Эсхан Мамед-Эминович и Щербинин, Владимир Георгиевич (1972). *Русско-турецкий словарь. 47700 слов*. Москва: Советская энциклопедия. 1028 с.

Ушаков, Эдуард (2008). *Турмыши: из истории села*. Чебоксары: Новое время. 592 с.

Ушаков, Э.С. (2013). *Турмыши. Из истории села* / предисл. В.П. Станьяла; худож. В.И. Разин. 2-е доп. изд. Чебоксары, [б.и.] (Типография № 7). 445 с.

Федотов, Михаил Романович (1998). *Словарь чувашских нехристианских личных имен.* Чебоксары: Чувашский государственный институт гуманитарных наук. 148 с.

Юдахин, К.К. (2000). *Русско-кыргызский словарь: 51000 слов* / под ред. К.К. Юдахина. Бишкек: Шам. 992 с.

http://enc.cap.ru/?tăworld&lnkă1570

https://www.wikiwand.com/cv/Пиçенер

https://www.wikiwand.com/cv/Пиçенер


